„Канаш“ хаçат çумĕнђе тухат̆.

КАПКĂН

11-мĕш №

Ийуншĕн 1926 ç. 2-мĕш çул тухат̆.

ÇУТТИН ХӲРИ (йурă).



Тĕп Ерехĕн хӳре вăрăм.
Ĕçессӳ килсессĕн—тăрăн
Ес çавах та (2 хут).
Çăмăрне-мĕнне пĕлмесĕр,
Урам тăрăх лĕђĕр-лĕђĕр
Уттаратăн.
Теп Ерех макаçин умĕ—
Те пĕве вăл, вăл те кӳлĕ?
Çăртаратăн.
Çиђ сехетрен илтĕн пĕр „панккă“,
Хул хушшине... ху хугланнă,
Лепĕстететĕн.

Теори килнĕ йалтанах,—
Иамшăк пекех—лапапах
Çут кĕлеңђешĕв.
Ђеретрех хула майрисем—
Мăвтăрскерсем, самăрскерсем
Карçинсемпе...
Каçпа шалтах ђерккелеççĕ,
Тăлттин та тăлттин сикеççĕ.
Арçынсемпе.
Ђĕресем те çĕреççех пуђ,
Вилессе те—вилеççех пуђ
Тĕп ерехпе...

Ҫӑваш Вӑрман Тресӗнҫе.

Вӑрман тресӗ пуйан ӗнтӗ. Ҫӑваш республӗкӗ вӑрманлӑ.

Вӑрманлӑ респуплӗкре Вӑрман тресӗ пурри те килӗшет. Вӑл паллӑ, йатлӑ, пуйан... унӑн вӑрман та тулӑх, хӑма савӑҫӗсем те... Атӑла пугнӑ паршисем те, суллисем те, Пӗр сӑмахпа каласан, —пуйан, нипоҫҫом.

Ӗҫлессе те ӗҫлеҫҫӗ. Анӑҫуллӑ.

Леш, Ҫӗрпӳ уӗҫтӑвком хулине 4 ҫул хушши Канаш стантсине кӳҫарнӑ пекех хӑвӑртласа ӗҫлеҫҫӗ.

Кӑҫал ӗҫ ӑнӑҫуллӑ пытӑр тесе, ҫак трест Коптарккӑри хӑма савӑҫне те сулӑласа Шупашкара антарҫӗ.

— Ну, савӑнӑҫ та... „Капкӑн“ ҫӗпписене савӑнӑҫ ҫитвеҫҫӗ.

— 4-мӗш ерне ӗнтӗ ку сулӑ Атӑл ҫинҫе ишсе ҫӳрет... Айтӑр-ха, кайса курар, терӗҫ те ҫупрӗҫҫӗ Атӑл хӗрне.

Ҫӑн-ҫӑнах илемлӗҫке!

Хуралҫи кунӗн-ҫӗрӗннех, лаҫкам шыва ӳксе, сулӑран тухса тарнӑ савӑт тӗпренҫӗкӗсене хӑваласа ҫупаҫ. Икӗ пакур хуҫса пӑрахнӑ ӗнтӗ.

Макӑра-макӑрах трест кантурне пыраҫ:

— Кӑларттарӑр ха, тархасшӑн, савӑта шывран кӑларас. Вутӑ тума та пулин йурӗҫҫӗ.

Решим екномиӗ вӗт. Иухса кайсассӑн луҫҫӑк пӗр пус та кӗсйерен тухмасҭ,—ҫыран хӗрне кӑларма укҫа кирлӗ, кӗсйерен тухаҭ, тесе савхосӗ пӗҫҫисене тӑратса вырта параҭ.

— Санӑн сыхласах пулаҭ, опесӑн, тет хуралҫа Миронӑв текенни.

— Аптришка! Пуҫ та ҫавӑрӑнса каймалла апла пулсан...

— Ку што. Тата тӗлӗнмелле економи пур трестӑн.

— Мӗн-ха, мӗн?

Капкӑнҫӑсем хӗрӳллӗнсех калаҫса кайрӗҫ.

Ӗлӗк трест 4—5 лашаллӑ. Лашисем е-ех! тоҫккӑ!... тытса кӑна пыр.

Халӗ економилесе лашисене йухтарса йаҫӗҫ. Пӗр лашине ҫеҫ кирлӗ ӗҫшӗн хӑварнӑ.

— Мӗнле ӗҫши апла?

— Суллисем—шывра, савӑҫӗ—вутта! Ку темех мар! Ӗҫке йуратакансем пур трестра. Лашине ҫавсен кӑмӑлне усраҫҫӗ.

— Хӗрлӗ Ту (Ҫӗрпӳ в.) ҫухӑнӗ 3 лаша, 2 ӗне тытакансккер—трестра касҫир та пурӑнаҭ. Ӑна Саххар Антоновҫӗ, теҫҫӗ. Вӑл трест пуҫӗнҫен нихӑҫан та уйӑрӑлми йапала. Ӗлӗкех трес пуҫӗн Ҫӗрпӳри савхосӗ пулнӑ.

Кам ӑна лаша парас мар? Ернесерен пӗрре, тата тройтсӑсем тума трест лашипе Ҫӗрпӳ йеннелле тухса вӗҫтереҫҫӗ.

Теҫетнӗкӗсем-мӗнсем вӑрмана кайма, тата урӑх кирлӗ ӗҫпе лаша ныйт..

— Ҫук! Памаҫҫӗ.

— Н-та! Ҫӑнахах ҫав, ҫӑн.

3 лашаллӑ ҫынсем хӑйсен лашипе ма ҫупӗҫ ӗнтӗ.

Ун пеккисемшӗн—хӑй килӗ, ӗҫкӗсем-мӗнсем трестри ӗҫсенҫен хаклӑрах.

Сулӑсене курнӑ пионерсем те ҫавнах калаҫҫӗ.

Пӗр „решимҫӗксемпе“ трест йышӗ ҫеҫ шарламасҭ.

Хӑлхи „Капкӑна“ ҫакланнӑ хыҫҫӑн та шарламӗ-ши?

ҪАПКӐ.

Ретавсирен: Халӗ сулӑсем мӗнсем Атӑл ҫинҫен пуҫтарӑнса кӗҫӗҫ ӗнтӗ. Тресӗн ӗҫӗсем те шакӑртатсах пыраҫҫӗ. «Капкӑна» тин тӳрлетсе ҫитнипе, тресӗн ҫуркуннехи карттине халӗ ҫеҫ кӑтартатпӑр. Пурлӑхлӑ хӑтана кӗрнеклӗ вырӑн, теҫҫӗ те, тресе те кӗрекере ҫи паллӑ вырӑн паратпӑр—„Капкӑн» перетовийӗ.

Ҫӑраҫҫи тупрӑм

Кашни йапалана тӗрлӗ май ӑнланма пулат̆. Анҭах кашни йапалан тӗп никӗс ӑнланӑвӗ пур. Вӑл пурнӑҫӑн пӗр-пӗр сыпӑ̈ӑнҭе ҫак сыпӑк вӑхӑтне тивӗҫ йапала кирлӗ пулни; кашни йапалапах еппоххӑна килӗшӳллӗ усӑ курасси. Ку йӗркене тӗплӗ ӑнланмашкӑн йатне ҫӑраҫҫи кирлӗ. Ҫак ҫӑраҫҫи—маттериалисӑм.

(Екмономис сӑмахӗ).



Ҫӑраҫҫи т͵прӑм.

— Ҫӑраҫҫи тупрӑм! Ҭӑнах... Атӑл хӗрӗвҭе, пуҭварта утса пынӑ ҫӗрте пӗр ҫӑраҫҫи тупрӑм. Телейе, тепӗр куннех хамӑнне ҫухатрӑм.

Халӗ—„Канаша“ Шупашкарта вулакан ҭылай, «Канаш» ҫине пӗлтерӳ ҫапас пулӗ, тетӗп. Йе... (Вулакансене: ҭӑнах епӗ пӗр шк͵ф, йе арҭа ҫӑраҫҫи тупнӑ, ретаксирен ыйтса илӗр)

— Тупрӑм та, те пуҭвара пӗлтерӳсем ҫапса тухас тесе, ӑшаланса ҫӳретӗп. Анҭах, те «ҫӑраҫҫи», те «уҫӑ», те «уҫкам», те „уҫҫӗ“, те «ҫӑра» тесе ҫырас. Кашни вулӑсрах йаҭӗ урӑхла та, кашнийех пирӗн йенҭи тӗрӗс, теҫҫӗ те... Аптришка!

— Тем „ҫӑраҫҫи“ тесех ҫырас пулӗ (ҫӑрана уҫмалли, уҫӑ, тени пулат̆) ҭӑваш ҭӗлхин тӗп калаҫӑвӗ. литтератту рӑллӑ кустэркӑҭӗ (кӑтӑрмаҭӗ) кирлӗ теҫҫӗ вӗт.

— Йурӗ-ха, йурӗ, темле йат ҫарсассӑн та. Аҫта ха?

Апла... Ҫакӑ им-ха? терӗ те, йулташӑм ман аллӑмри ҫӑраҫҫийе илсе йенҭен йевне ҫаврӑркаласа пӑхрӗ.

— Кун пек ҫӑраҫҫи кумай. Ыйтакан та нумай пулӗҫ. Ҭӑвашсойусӑн, прокурор помошнӗкӗн Лепетӗвӑн, хамӑн, Опкомра та... кун пек. терӗ.

— Тӗлӗнсех кайрӑм. Ӑӑрӑ шухӑшӗ те килсе кӗрес пек туйӑнмалла.

Анҭах—

— Мӗн тӑвас-ши ку ҫӑраҫҫипе? текелесе пуҭвaралла тухнӑскерсене—маттериалисӑм—ҫӑраҫҫи тени аса килсех кайрӗ. Ку ҫӑраҫҫипе мӗн тумаллине тавҫӑрса илӗмӗр.

— Пурнӑҫ хӳглӗхӗсене, пӳлӗмӗсене уҫа уҫа пӑхмаллаҫке уннала, ревиҫи...

Йурат̆. Тухатпӑр.

Ик-виҫ ыйту:

1). Мӗншӗн-ха ҫав мӑн хырӑмлисем шит сарлакӑш, йе тата сарлакарах реҫиналлӑ пыҫхисемпе (пӳҫыххи) ҫӳреҫҫӗ?

2). Мӗншӗн ҫак революци хыҫҫӑн вӑрӑм сарлака сӑмсаллӑ кепкӑсем тухса тулҭӗҫ?

3). Мӗншӗн хӗрарӑмсем те сӑранпиншаклӑ, кепкӑллӑ пулса кайрӗҫ?

4). Мӗншӗн ҫавӑ йапала пӗр... мал йенҭен тулат̆, хыҫ йенҭен пушанат̆?

Ҫут ҫанталӑкра кун пек ыйтусем темӗн ҭухлӗ. Ҫӑраҫҫи тупиҭҭен вӗсем аса та килмен, ответсем те темле пулмалла. Халӗ тӳрех тӗп никӗсне—мӗншӗн ун пек пулма кирлине уҫса пӑхатпӑр.

Кашни ыйту ҫине: ҫавӑн пек кирлӗ (целесообразность) тесе ресоҭутсилеме йурат̆. Пурнӑҫра, ҫут ҫанталӑкра ҫӗнӗрен мӗн кирлӗ—ҫав тухса сарӑлса пырат̆, кивелни хӑрса ӳкет.

— Мӑн хырӑмлисем ансӑр пыҫхи ҫыхса ҫӳресессӗн хырӑмӗсене картлантарса, сӑпсаланма пултараҫҫӗ, реҫинӑ пыҫхи калттишпех хырӑма ҫат! тытса лартат̆ те, аван..

— Ҫиңҫешкисене мӗне вӑл ун пек

Ҫӑраҫҫийӗ кун пек. кӗлет питӗрмелли йышши, мар та, темӗншӗн карттин тӑваканни урӑхне тунӑ... Хӑйне „Капкӑна“ лектерестӗн тем.

сарлака пысăки? Вăл пĕшкĕнсенех хырăма ыраттарать. Пĕр вăхăтра ţăваш аţисем те сарлака ресинлă пысăкисем туйанкаларĕç те. Туйăн кайма çеç иккен, тыр вырма çыхса тухмаççĕ.

Кепкă сăмсисем вăрăмми те, ытти те çавнашкал пулать. (Хăвах ответ тупха, вулакан! ţасах тупăнĕ).

Халĕ уţрештенисем тăрăх, хула тăрăх кайар. Унта çавăн пек йăпаласемех «тселесоопраснăç» тени пулĕ.

Çăраççи ĕçлет.

Ответлисем.

— Хăш уţрештенире мăшăрлă ĕçлекен ытларах? Упăшкипе арăмĕ, арăмĕпе упăшки?.

— Ţăвашсойусĕнţе.

— Мĕншĕн?

— Мĕншĕн тесессĕн, вăл пурлăклă, хуçайствĕннăй кĕтес. Шутла-ха хăвах: хусах ытларах укçана тăкать-и, йе мăшăр? Мăшăр тирпейлĕрех тыткалать, пурнас тесе пурнать, теççĕ.

— Ах ха! Ну, мĕнле 3-4 мăшăрах и?

— Йерыштĕвсем, Соссуатсовсем (темме пуп шăршиллĕ хушамат), т. ыт.

— Ăçта тата хăйсен ратнисене ĕçлеме ытларах кĕртеççĕ?

— Ţăвашсойусĕнţе

— Аçта пуп тавраш ытларах ĕçлет?

— Ţăвашсойусĕнţе, тата Ţăваш ţĕлхи тĕлĕшĕпе ĕçлекен кĕтессенţе.

— Ţăвашсойусĕнţе,.. ну, кала-ха.

— Правлени ţленĕн арăм йăмăкĕ, правлени пуçлăхĕн те... теловот—пуп хĕрĕ, машинисткă пуп хĕрĕ, рекистратăр—пуп хĕрĕ.. тăршшипех калаза кайма пулать.

— Çапла ĕнтĕ вăл. Пĕр йенţен кунта авалхи йăласене çирĕп тытакан халăх пурăнать. Ĕлĕкхи пуçлăхĕ—А—нăв текенни хăй ратнисенţен пуçларĕ те, ку пуçлăхĕ те... Ма йулас?

Мĕ тума кирлĕ çикăн пек анлă хăлхасем?

Тата-- кĕсйесем... кĕсйесем?

— Кам аллинţе ţул ытларах?

— Коммунхосăн.

— Кама ытларах ţуллама тивĕç?

— Комунхоса.

Вĕçĕмсĕр ыйту, ответţĕсем те вĕçĕмсĕр. Майа кайрĕ хайхискер. Уçса пăхатпăр та, никĕсне хыпалатпăр.

Çырсах пырăр.

— Мăшăр пĕрле, пĕр сĕтел хушшинţе пек, пĕр çăвартан тенĕ пек ĕçлени —тселесоопраçнăç... Иутран мĕн саместиттĕл кирлĕ мар, вăл урăх пăтă та пĕçерме пултарать, вăл... мăшăр апата та пĕр вăхăтра таврăнать, пĕр пĕрне пулăшать, пĕр портфĕллĕ, т. ыт.

Шалаллах кĕрсе кайрăмăр. Ку çăраççипа урăх мĕн мĕн тупнине выçăвккăна хуратпăр. Унта пăхăр.

Малтанах комунхос алăкĕсене уçса ţулсене висĕпĕр. Кайран ытти «тселесоопраснăç».

— Анţах, çăраççи алăрашăн вăрă ан тейĕр. Пĕтĕмпех кăтартăпăр.

ВАÇАНККА.

Выстăвккăра

Пуҫвар.

Акă Атăл хĕренҫи пуҫвар. Шупашкар ҫĕри. Шупашкаршăн вăл питĕ хаклă вырăн. Ҫавăнпа та унта пăҫĕ-пăҫĕпех хĕвелҫармăш, майăр хуппи. (Шупашкарĕнҫе пурте ҫӳпĕлеме йуратаҫҫĕ).

Пуҫвар ҫине Ҫăвашкомунхосĕ те йуратса пăхаҫ. Ҫулленех пуҫвара йусаҫҫĕ, кĕркуннеҫҫенех тивĕсленҫи тăваҫҫĕ. Ҫулленех тата ыт ахалрен ҫеҫ ҫийелтен кăна. Мĕншĕн? мĕншĕн тесессĕн килес ҫула йусамалла тăвас пулаҫ. Ие пайан ĕҫлекенех йусаҫ, йе хайсен сойусĕнҫе тăракан. Ĕҫпайĕ те савăнаҫ: ĕҫсĕррисене ĕҫ; Комунхосĕ те ахаҫ вырмасҫ. Тсселесоопраснăҫ.

Ĕҫ ҫукран ĕҫ.

Хуласенҫе те „кĕрĕк аркине йавалакансем“ пур. Акă пĕлтĕр ҫулла арҫын мăнастирĕнҫи ҫиркĕве пăсса кайп тутарма пуҫлаҫ ҫухне ҫуртне йĕри тавра мостки турĕҫ Ку ĕҫе 15 ҫын 3 кун ĕҫлерĕҫ. Кăҫал Комунхос ăна сӳтгерсе таҫта илсе кайрĕ. Пĕр ернерен каллех ҫиркĕве пăсма мостки турĕҫ. 12 ҫын 3 шер кун ĕҫлег. Пĕр 60 тенкĕ хатĕрле кăна! Пăвăҫĕсене турттарма та 20—30 тенкĕ кирлĕ. Ҫакăн пек муталанма кирлĕ-ши? „Кĕрĕк аркине“ йавалани мар-ши-ха ку та?

Ытти ҫĕрсенҫе те ҫавах.

Савăнсах ĕҫлеҫҫĕ. Ма савăнас мар. Ĕҫсĕррисене ĕҫ (тселесоопраснăҫ!) Тепĕр уҫрешгени тата виҫĕ хут пăсса тутарсассăн татах та аван пулмалла.

Анҫах Ҫăваш респуплĕкĕнҫе камсем ĕҫлеҫҫĕ-ха?

Ҫăваш ĕҫлеме пултараймастăн.

Пĕтĕм ҫăваш ĕҫлекенсене выстăвкка ленктеретпĕр, „капкăнласах“ пулаҫ.

— Мĕншĕн?

— Ҫăвашсем ĕҫлеме пултараймаҫҫĕ вĕт. Аслăрах вырăнта лараканнисем те ҫавнах калаҫҫĕ, ҫăвашсем те..

— Калаҫакансем хыҫҫăн кайса, акă Ҫăваш Сут ҫурҫĕ туса пĕтерҫҫен ишĕлет, терĕҫ. Ăҫта ишĕлни? Иумахсем, теорисем шутласа кăларакансем пурах пулас ҫав Шупашкарĕнҫе те.

— Теорийĕ каҫхи тата, есĕ пăхха, пăх практĕкра кур: ҫиркусене, кив ҫул куписене пăснă ҫĕрте ҫăваш ĕҫлеймест, ҫул турттарнă ҫĕрте--ҫук, хайăр турттарма вĕренеймен. Леш сăра пушатнă ҫĕр те те темле ҫурмалла 6—7 ĕҫлекелеҫҫĕ таха 20—30 ҫын ҫине, ытти ҫăвашсем ҫирлесе ӳкеҫҫĕ, тет. Насус уҫласа шыв кăларма та пултараймаҫ. Хăма йатакансем те... Выстăвккăна ахаҫ кам..

— Апла... ҫăваш поеҫĕсем кашнă кĕтесрех. „Шупашкар—ҫĕри“ тесе талттин-талттин сиксех кăшкăраҫҫĕҫке.

— Кăшкăраҫҫĕ те...

— Пăхăсан, ку ҫĕрере ҫăваш йунĕ хутшăнма пĕлмесĕр кĕвелĕкленсе пыраҫ. Рассыҫнăйа та йамшăка та... ҫăваш пултараймаҫ, сăра пушатма та.

— „Ҫĕрене курăпăр ха малалла та, халĕ кур-ха ĕреҫĕпе.

Ĕҫ тупмалли ҫул.

Акă хӳмеллĕ шур ҫурт. Ĕлĕк „тĕрме“ теттĕмĕр ăна, халĕ „ĕҫ ҫурҫĕ“ Кунта лексессĕн ҫăваш вара нимĕн шыраса ҫӳремесĕрех ĕҫ тупатăн. Иунех те тупма пулаҫ. Кам ĕҫе кĕрес тет, ҫавăнта лекес пулаҫ, тессĕм килсе кайрĕ.

Уҫрештенисене ҫăвашлатни.

Уҫрештенисене ҫăвашлатаҫҫĕ тет те, унта та ҫавахи вара? тесе тĕпкĕҫлеме, пуҫларĕ выстăвкка пынăскер.

— Ку, сăмахран, Ĕҫпайĕнҫе миҫе ҫăваш? Профсоветра, Финанс кукринҫе?

— Аптăрарăм тăтăм. Кам мур пĕлет. Акă выстăвккăна ҫакăн пек хут ҫитрĕ:

— „Пуҫлăхĕ („управиттĕл“ тенине): Миҫе проҫҫăвҫĕ ҫавăта пирĕн вырăс, 70 ҫĕ-и?

— Управтĕлĕ: 70 ҫеҫ.

— Пуҫлăхĕ: Апла пулсан 75 ҫитерес. Илес ҫак арăм йамăкне. Ҫăвашла проттоккол мĕн ҫырмастпăр. Мĕне ҫăваш? Перевоҫҫĕксене те кăларса ыватаҫҫĕ вот, сăмахран ак, проккураттурах... Ĕлессе те ҫăвашлах ĕҫлеҫҫĕ.

Шалти Ĕç Комиссариатĕнҫе.

Авă ҫăвашла вывĕскăсене асăрхаса тăраканскерсен арҫиме силлекелесе пăхăпăр.

Вĕсен 106 ҫынтан 63 шĕ ҫăваш. Вĕсенҫен 3 шĕ ответлă вырăнти ҫăвашсем. Вырăсĕсенҫен 42 ҫынтан 5 шĕ ҫăвашла сăмахлама пĕлеҫҫĕ, ҫырма 1 ҫеç пĕлет.

Ҫăваш ҫĕлхине реализатсилекен комиҫҫи те пур. Пурăнмаллипех пурăнаť.

Ҫавăнпа та кĕрекен хутсенҫен 100°орне вырăсла ҫырнă, тухаканнисене те 100°/°-тах. Пăх та савăн! Илемлĕ арҫа! Ытти арҫысем те ҫавăн пекех илемлĕ.

Акă кун пек кăриккатурăсем те пур.

Ĕҫлеме кĕреҫҫен:

— Епĕ—ҫăваш, Ҫăваш респуплĕкне куҫас тетĕп ĕҫлеме. Тăван ҫĕр-шыв, тăван ҫĕлхе...

Кĕрсессĕн:

— Мĕне вăл ҫăваш хаҫаҫĕ, ҫĕлхи мана? Отҫотсем ҫаптарас пулсассăн та ăҫта та пулин урăх хулара ҫаптарас?..

— Мĕн вăл Шупашкар, Улатăр?.. „Казань“, „Козьмодемьянск“, „Нижний“, „Москва“, тесе ҫырҫĕр епĕ ҫырнă кĕнеке хуплашки ҫине.

Халĕ ҫăн... Ку сăмахсем пурнăҫрах. Ҫăваш ҫĕрĕнҫи типокрафи 13 листа отҫотлă кĕнекене кăларма 4.500 тенкĕ ыйтнă. Кĕнекине Хусанта 4.800-ре кăларнă, тата комунтировккăсем мĕнсем, ҫул сахал мар хăйпăтнă.

Вот карттин. Ак хай ҫăраҫҫи! Вот шан проҫҫăнне те.

„Ни расквор-у-у!“

Ҫăвашсемех ҫавкашкал пĕрре Шупашкара, йе урăх ҫĕре вырнаҫсан шăрттсене тăратаҫҫĕ, йе... вырăс пулса кайаҫҫĕ. „Авлантăм ҫавăн ҫине“ текеленĕ хыҫҫăн:

— „Не расковору епĕ ҫувашски“ теме те тытăнаҫҫĕ.

— Авă Есмел пуҫнитсинҫе (Кĕҫкей вул.) ҫăваш аҫи Кромăв практгĕкра пурăнаť. Ҫăвашла калаҫма тытăнсассăнах:

— Ҫево ковориш? С кем ты раскувариваш? Если со мной—то йа совершеннă свой йасык не расковаривайу“, тет.

Акă реализатси, ак „ҫăвашлу“! Вăт ҫĕре!

Выстăвккăра тата нумай, ўлĕмрен пăхса тухăпăр. Халĕ ҫăраҫҫи ĕҫлеме пăрахманха. Анҫах хуҫине те ҫасрах тупасҫĕ.

ВАҪАНККА.

«Тселесоопраснăç».

Йулаш йалĕнҫи (Ҫупай в.) йалсоветра ĕҫлекен Ҫтаппан Саҫокĕ кирек мĕн ҫыртармалли, пиҫет пустармалла пулсанах пĕр пуштух ҫуттине ыйтаť. Ҫуттине нерсе супаť те, йал тăрăх вăрҫса ҫўрет. Нумайах пулмсť йалти топрисывнĕкăнне Йатак Ҫеменĕнне пĕр пўрнине ҫыртса татса илнĕ. Кăлпасси,ʹсаккускă... тенĕ.

ПАШУР.



Саҫок:—Епĕ САКС ра ларакан пуласшăн. Ытгисенҫен йулас ҫук. Кашни мăшăртан пĕрер ҫетвĕрт, «ҫуттине», тепĕр витре сăрине хăйпăтмалла.

Инке:—Мĕн тăвас тен, сĕрмесĕр ҫупаймасť ҫав, епĕ те илсе килтĕм, ĕç пурҫĕ те...

ТАРĂН ПĔВЕ.

— Ох, сирĕн пĕве тарăн иккен. Маттур!
— Ма? Çын кайса вилнĕрен-и? Вăл тарăнран мар, çынни ытлашши ÿсĕр пулнăран.

Униççен укçа ђăпти.

I.

Иалтан килнĕ йулташ каласакă тартрĕ.

— Хĕрарăм тени çав тери ђейе! Сăмахран, Ђалăш Лукан Укçини йатлă пулнă арăмнех илер. Такçанах Лукка хăй арăмĕ укçа пухнине сиснĕ. Çăмарта сутати, çу уçлати—Луккана пĕр пус та çук. Çийĕнђен вăрçаť:

— Мĕнле укçа сана, ÿсĕр тăмана! Иăван вађђи кĕпелĕх илтĕм, Аннийа—ĕмкĕђĕ...

Арăм тÿрĕ мар пулсан, ун укçине ăçтан шута илсе пыран? Лукка аптраса çигрĕ. Ђышкăпа, йе пуслăхпа мар, йуман скамейккăпа хĕнет арăмне. Арăмĕ йе нимĕн те ђĕнмест, йе пĕр май «кăравул» кăшкăраť.

Аптраса çитсен, Лукка йумăçа кайаť.

— Пулăшха, кинемей! Укçине шеллемĕп.

Анђах йумăç карђăкне паран тенипех ултлалаймăн.

— Кÿр, тет ик сум вунă пус, вара калăп.

Пађĕ вĕт. Йĕре йĕрех пађĕ, мĕншĕн тесен пĕлес килет.

— Арăму укçа ђăпти тупнă, тет йумăç.—Анђах укçа ђăпти тукатса хунăскер. Тухатчине епĕ сирсе йатăм Тупсассăнах илме пултаратăн.

— Сана калама лайăх—ил. Ăçтан илес?

— Ăçтан илмеллине пĕре пăхсах пĕлмелле мар. Тата ик сум вунă пус илсе кил. Вара калăп.

Çапла Лукка ним пĕлмесĕрех тухса карĕ.

Акитаттăр.

Акитаттăр тесе пирĕн йалта—октăпĕр реро̧ҫутси хыҫҫăн Совет влаҫĕ ҫинҫен халăха ăнлантараканçене калатҫĕҫ. Хаҫ тата урăх тĕслĕ ҫынсене, вăрăм ҫӳҫлĕ пупсене „акитаттăр" теме пуҫларĕҫ. Мĕнлеши ха ку капла? Вăрăм ҫӳҫлĕ, ҫармак куҫлă пупсем, Совет влаҫĕ ҫинҫен тĕттĕм хресҫенсене ăнлантарма пуҫларĕҫ ши? Ҫук. Вĕсем ăнлантарасса ăнлантараççĕ те, анҫах Совет влаçĕ ҫинҫен мар.

Тăвайĕнҫи (Ҫĕрпӳ у.) Ҫпиритонăв пуп йалсем тăрăх килтен-киле турăшпа ҫӳренĕ ҫух, хресҫенсене ак ҫапла ăнлантарса ҫӳрет:

— Хресҫенсем, турă ҫурисем! Пирĕн ĕмĕр кĕскелҫĕ. Микула патшана сирпĕтнĕренпе епĕр, хырăм тăранаҭҫен ҫăкăр ҫисе кураймарăмăр. Комунисçем турра кӳрентернипе ҫăмăр ҫуми пулҫĕ ĕнтĕ,—тесе ҫӳрет.

— Е, ку нимех те мар-ҫке, ун пек кашни пупах супĕлтетет ăна,—тейĕр есĕр. Ҫăнах та кашни пупах Совет влаçне курайманнине епĕр пит те лайăх пĕлетпĕр. Епĕр вĕсене:

— Ҫӳретҫĕрех хăйсен йуррине йурласа, хресҫенсем пупсем суйĕҫтернине хăйсемех ăнланĕҫ;—тетпĕр. Анҫах...

Ҫак Ҫпритунăв пуп («Сар пуп»—теҫҫĕ ăна йалта) Парттин 14 ш сйесĕнҫе пулнă тавлашусем ҫинҫен хресҫенсем хушшинҫе ак ҫапла «акитгироваҭ» туса ҫӳрет:

— Акă ĕнтĕ тĕнҫе пĕтеси ҫитрĕ. Комуниссемпе комуниссем ҫапăҫа пуҫларĕҫ. Вĕсем пухусенҫе ҫеҫ мар, хаҫатсем урлă та кĕреше пуҫларĕҫ. Хули хулипе пĕр майлă пулса, пĕр пĕринпе ҫăпаçаççĕ. Пуртте хăйсем асли пуласшăн тăрăшаççĕ. Хаҫ пĕре, хресҫенсене «Совет влаçĕ ĕҫлекененсемпе хресҫенсен влаçĕ», тесе калаççĕ, анҫах пĕре те вăл тĕрĕс мар. Мĕншĕн ха пирĕн хресҫенсенҫен ЦИК-а пĕрне те суйламаççĕ? Мĕншĕнха пĕр Калининсем анҫах влаç тытса тăраççĕ?—тесе ҫӳрет.

Кунсăр пуҫне тата вăл вулăсри примернăй хуçайствăсен авторитттетне путарса ҫӳрет. Вĕсем ҫинҫен тĕттĕм халăх хушшинҫе тем те пĕр сарса ҫӳрет. Ăна ҫаракан никам та ҫук. Кам ҫарĕ ши ҫак «акитаттăра»?

ТĂВАИСЕМ.

Капкăнран: Ахалех апла ыйтатăн, аҫам! Пĕре «Капкăна» лексен хăйех ҫаранаҭ вăл. Ҫăнах та вăрăм ҫӳҫлĕ «сар пупсене» ЦИКа кĕртейместпĕр ĕнтĕ, мĕншĕн тесен пирĕн «Капкăн» та ĕҫлекенсемпе хресҫенсен влаçĕпе тухса тăраҭ.

II.

Луккан пурăнăçĕ киҫемленсе карĕ. Пĕре вăл ҫакăн пек йапала кураҭ: илет арăмĕ пĕр ҫăрка, вĕҫтере параҭ пахҫаналла.

Лукка ун хыҫҫăн. Карҫăк кĕреҫе илҫĕ те, тапратрĕ ҫĕр ҫакалама.

— Ҫакаласа хураҭ укҫине, шуйтан!—терĕ Лукка.—Ну, тăхтаха сана!

Каҫала пулсан калаҭ:

— Кĕркунне пулҫĕ. Паранкăсем кăларма та вăхăт ҫитрĕ пулĕ. Кӳрха кĕреçе. паранкă кăларам!

— Ес, Лукка, тепĕр вĕçне кай. Ку вĕçĕнҫен еп пуçларăм. Тепĕр вĕçĕнҫен ҫакала.

— Сан ĕç мар, тет Лукка.

Тытрĕ те кĕреҫе арăмĕ ҫакаланă ҫĕртенех ҫакалама тапратрĕ.

Ҫакаларĕ, ҫакаларĕ, ҫакаларĕ, ҫакаларĕ... Пĕтĕм паранка кăларса пĕтерҫĕ, нимĕн те тупăнмарĕ.

III.

Самакункă сутакан Урине патне ăс ыйтма карĕ.

Урине шукăшлакаласа тăркаларĕ те, калаҭ:

— Сан арăмăн укçа ниăçта та мар, ҫăмхашăнҫех.

Сан арăмун ҫăмхисем пит пысăк, аҫа пуçĕ пекех. Ĕнерки, виçĕм куни сан карҫăку патне пытăм та, тĕлĕнсе хытсах карăм:

— Мĕнле, теп, тăхлаҫă, ҫан ҫăмхусем пит пысăк.

Вăл шăрҫĕсене тăратрĕ пăрахрĕ:

— Сан ĕç, тет, пирĕн упăшкасене ӳсĕртсе ухмаха йертесси. Пирĕнпе, хĕрарăмсемпе сан ĕç ҫук!

— Ҫăмхашăнҫе еппин, терĕ хĕпĕр-

ÇВЕР ТИММИ.

„Çвер"—тенĕрен есĕр ытлашки хӑраса ан ӳкĕр, вӑл хӑй çвер мар, хушамӑҫĕ çеç ун̆ӑн «çвер». Хӑйне ӑна Тиммӑ тесе ҫĕнеççĕ. Вӑл Ĕлпуçсем (Тӑвай в.) куштан пуйӑн ывӑлĕ. Куштан тенинҫен те есĕр шарт сиксех ан тӑрӑр, вӑл пире, вулакансене нимĕнех, те тӑваймĕ. Анҫах йалта вӑл хӑй хуçа: çăмрӑксемпе пионерсене хӑй алливҫе тытӑт вара. Вĕсенҫен çу кӑларас пекех ҫӑмӑртат варя вĕсене.

Тӑп-тӑр кӑнтӑрла Ĕлпуç йалĕпе иртсе пыратӑп. Мана хирĕç урампа Çвер Тиммипе тепĕр икĕ аҫа пыраççĕ. Çӳçĕпуçĕсене тӑраткаласа йанӑ, пĕтĕмпех çвер вара. Ун йулташĕсем пĕри: Малиç Иванĕ. тепри Сӑмйун Ĕлексейĕ. Виçĕшĕ те урса кайнӑ йытӑсем пек ман патна пырса çапӑнҫĕççĕ. Çвер Тимми куçне уçрĕ те:

— Аçта кайатӑн, ҫӑваш?.. Ес пионер-и, комунис-и?.. Хĕрлĕ калстух çуки санӑн?!—тесе ман мӑйа хыпаласа пӑхрĕ. Епĕ ҫĕтрене йертĕм. Хӑрани пе ҫĕлке—çăвар шалтах хытса кайнӑ манӑн.

— Çук...епĕ ун пеккисенҫен мар, вĕсене епĕ пĕлместĕп те,—терĕм епĕ. Хам унталла—кунталла пӑхкаласа илетĕп тарса пытанмалли вырӑн шыратӑп.

Унҫҫен те пулмарӑ урампа пĕр хĕрлĕ калстухлӑ пионер иртсе кайнине курат карĕç ҫак Çвер Тиммисем. Ӑна курнӑ пеккĕн вĕсем манран пӑрӑнса кайрĕç. Епĕ пĕр пура кĕтессине кайса, хĕсĕнсе тӑтӑм та, хӑлхасене ҫанк тӑратса итлетĕп.

— Есĕ и-ха хĕрлĕ калстух çакса çӳрекен?.. Е!? Ухмак! Ухмахсем ӑна хĕрлĕ йуратаççĕ, есĕ те хĕрлĕ калстух çакса йанӑ... Никамран ыйтман туман...Кам хушнӑ сава хĕрлĕ калстух çакса çӳреме?—тесе кӑшкӑрса пионер мӑйĕнҫи калстуха татса илҫĕç. Пионерĕ (Амос Тереҫтйĕв) йĕрсе килнелле ҫупрĕ.

Унтан урса кайнӑ Çвер Тиммисем урам тӑрӑх малалла сулӑнҫĕç. Нумайах та утмарĕç, пĕр комсомолĕçа Елексантр Кĕçтенккийĕне тĕл пулҫĕç. Ӑна вимсĕрех хĕнеме тытӑнҫĕç. Аран Турат Сантӑрĕпе Нил Матви пырса ҫарҫĕç.

Çавӑн пек ĕнтĕ, йулташсем! Çвер тени çверех çав. Вӑл çверсем кашни йалта пекех пур. Вĕсене тытма пирĕн „Капкӑн" пур.

Малашне пирĕн кашни йалах çакӑн пек çверсене тытма капкӑн лартас.

КАПКӐНÇӐ ҪĔППИ.

тенипе Лукка...—Çăмхара пулсан йурат̆. Унтине тупӑпӑрха!..

IV.

Виçĕ кун иртри, иртмери, Лукка Урине патне хашкаса персе те çитет. Урине, ма килнине, тӳрех туйса илҫĕ:

— Тупрӑни, тет.

— Тупрӑм, тет кулкаласа Лукка.—Ҫасрах хӑйӑ çутха. Укçине шутласа тухар.

Урине хĕпĕртенипе сиккелесе тӑрат̆ анҫах. Хупахра ларакан ытти çынсем те хĕпĕртерĕç. Лукка шуҫĕпе ерĕх илҫĕç.

— Вӑт, Лукка... пултарат̆. Тавай ĕçетпĕр!..

Çăмхине сӳтме пуçларĕç. Çиппи вӑрӑм вĕçне те тупаймӑн. Çăмки варинҫе темĕскер кӑштӑртаттарат̆.

Сӳтрĕç, сӳтрĕç, кĕтесси курӑнма пуçларĕ:

— Укçа, укçа, тет кӑшкӑрса Лукка.—Урине, хĕпĕртенипе пĕрер ҫеркке парха.

Татах ĕçрĕç. Пĕтĕм çăмхине сӳтсе пĕтерсен пурте ахлатсах йаҫĕç.

Мĕнле ҫейе арӑм пулнӑ? Çăмха варринҫе перекет кассинҫен панӑ кĕнеке выртат̆. Кĕнеки çине «73 тенкĕ те 40 пус Укçинене памалла. Вӑл укçана унсӑр пуçне никам та илме пултарай маст». тенĕ.

— Ҫавса çывӑх та, çыртаймӑн, тесе Лукка, кĕнекине лӑштах çĕре пӑрахса пĕҫĕк аҫа пек ӳлесех йаҫĕ.

М. АНТРИЙЕВСКАЙА.

Пупсен тамаши.

Ёлӗк ђиркӳре те, шкул-та та пуҫлӑхђӗ...



Хӑлхаранђӗ ҫав ӗлӗк... итлеҫҫӗ. Хале те пӗр икӗ шӗвӗр хваттере вӗренме ҫӳреҫҫӗ те. Хӑлхинђен те пулаў те, анђах..

Виҫ ҫын та ҫурӑ.

— Ђиркӳре пайан виҫ ҫын та ҫурӑ анђах, ку виҫ ҫын ҫурӑшӑн сасӑ пӗтерни те ахађ. Хамӑр та ђиркӳре виҫҫӗн, кашни ҫынна пӗрер ҫеҫ тивет.

— Вӑрҫаттӑр та, вӑрҫаттӑр, теҫҫӗ, шӗвӗр камсулӗсемех тӗртеҫҫӗ сӑмсаран: Вӑрҫисем те пупсен пулаҫҫех ҫав. Хӑлха йӳҫӗхрӗ ӗвтӗ. Ие ӗҫсе супаҫҫӗ, йе урӑххишӗн вӑрҫӑ.

Пухусем пухсан анҫах...

— Вăрçса вăрçмасăр, турри те вăрçтарать.

— Кăçалхи çул „хушă вăккасани. Çавĕпех çамăр ыйтса молепĕнсем тумаллаççĕ. Выçлăх çулах майа кайнăççĕ. 12-шер прихут халăхве пухса укçа тăваттăмăр, халĕ...

Халĕ N-кассинçи пупсем çўçрен тытăçсах, вăрçса кайнă. Пĕри-турăран çамăр ан пар, тесе ыйтса кĕлтума молепĕн пухасшăн.

Тепри калать: Ун пек кĕлĕ çук, çĕнĕрен çыратни мĕн?..

— Çырас, кирлĕ тĕк...

Çак ыйту тăрăх пухăннă пуху ĕнтĕ карттин çинçе. Те, кăçалхи пек çамăрлă çул—çамăр ан пар, тесе кĕлтумалла пулать ĕнтĕ, те...

Çитменве ав мĕнле сăвăсем шăрантараççĕ.

Пирĕн патри пуп.

Выç кашкăра курсассăн,
Тута, тесе ан шуглăр;
Нўхреп куçа курсассăн,
Иулташ, тесе ан калăр.
Выç кашкăрăн пĕр шухăш:
Путек сурăх тытасси;
Мăнтăр пупăн пĕр йăла:
Укçа-тенкĕ пухасси.

Вăрăм çўçе курсассăн,
Майрака кирлĕн туйăнать;
Нўхреп куçве пăхсассăн,
Тыр ыйтассăн туйăнать.
Шыçмак пупăн мăн майри
Иал арăмсем хушшинçе,
Пуп йаçĕпе мухтавать,
Ыр йат, тесе хăй шуглать.

В. ХУТАР.

„Капкăн“ хушшине.

Ҫулта—йĕрте тем тĕлве те пулăн. Ђупай вулăсĕнђи Аршăна касси виттĕр тухатăп. Ҫĕтĕкрех пиншак уртса йарса хам. Пралук тĕлĕнђе пĕр йаш ађа тăрат̆.

— Претҫетаттĕл хăш тĕлте-ха сирĕн? тесе ыйтрăм. Ҫакă мана пуҫран пуҫласа ура тупанне ҫитиђђенех кусĕпе виҫсе тухрĕ те: Мĕн тума кирлĕ ха вăл сана? тугарђĕ. Епĕ: Хам ĕҫпе кирлĕђђĕ, терĕм. Каламаст̆ тата, шпана! терĕ ман ҫын. Мĕнле шпана? тетĕп.

— Шпана, теҫҫĕ ҫав сирĕн пеккисене халĕ. Ĕлĕк слоттой роттă теђђĕҫ, тет.

— Есĕ ăҫтан ҫынна тӳрех апла калама пултаратăн, мĕлескер есĕ? тетĕп.

Ман кăшт хытăнрах тухрĕ курнат̆. Ађа пит кусĕ кăварлана пуҫларĕ:

— Сан манпа вăрҫас килет-и? Вăрҫан пулсан первай самсуна шăл, куҫ пӳрне тасат, тесе măшкăла пуҫларĕ. Епĕ ирĕксĕрех самсапа куҫ лапине хыпаласа пăхрăм: нимте ҫук. Ађа ăна курсан татах: Тасат, тасат лайăхрах! тесе кулат̆. Мĕнле сана комсомолĕссем ăса вĕрентмеҫҫĕ ара? тесе йатăм епĕ аптăраса. Ăна илтсен пушшех тапранса карĕ ку:

— Што мана комсомол! Епĕ хам комсомол—хĕрес ҫакман виҫĕ ҫул.

Акă пăх! тесе кăкрине уҫа пуҫларĕ.

Вăт ҫаклантăм вĕт, аран уйăрлса усалтан. Кайран ыйтса пĕлтĕм, Пуҫласах: Ара вăл пуйан ывăлĕ—ҫу арман хуҫи ывăлĕ Ҫĕмйан Михађи пулнă сан, терĕҫ.

— Йӳнĕпе уйăрлнă ес унтан, хăш ђухне вăл аплипех вĕҫертмест, теҫҫĕ.

Ку «кађђă» йалта питĕ саттур иккен. Укҫипе такама хăратат̆.

— Пĕр ђервонтсă не шалкă! тесе йунат̆ тет хăйне хирĕҫ ҫынсене. Ҫак „ыр ҫын“ ывăлĕ ку таранђен «Капкăн» тĕлне пулайман, тинех лекрĕ пулас-ха! Техех, кама курнă ăна, «слоттой ротă», „шпана“ теме те пăрахĕ. ПИҪЕН.

Вăйлă ҫын.

Ҫĕнĕ Тукайра Шĕнĕрпуҫ вул., Шупашкар у. Пăрăс Хĕлĕпĕ пуринђен вăйлă, хăватлă. Халăх ҫине ђас-ђасах ҫуттине сыпса тухат̆. Хăйне хирĕҫ калакансене хĕрсе ђĕшерсе тăкат̆, ҫавăн пекех кантăксем ҫĕмĕрме те питĕ маҫтăр.

Т. Матвейђăн кантăксене ҫĕмĕрсе пĕтерђĕ.

(Шурă хут).

Пăрăс Хĕлĕпĕ: — Ĕҫлетĕп. Кантăка алăпах ҫапатăп, ҫапах йун тухмаст̆. Патша ђухнех вăрҫнă... Пултаратпăр.

— Епĕ салтакра асап курнă, ҫавăн шăн ҫĕмĕрес те...

Йурамаст̆.

Тр-р р-р-р—Тĕп стантси! 50-па ҫыпăҫтар-ха?

— Иара пар.

— Аллă-и ку?

— Аллă!

— Иулташ Петрова калăрха?

— Есĕ 49 шанкăртаттар!

— Ара 49 сирĕн урăх ҫуртра вĕт?

— Ҫук йунашарах, кунта (50) йурамаст̆,—кунта капинет претҫетаттĕђа.

МИР.

Таплитсӑ умношени! таплитсӑ...

Ех, пит те йӑвӑр йапала ҫав шутлама вӗреьесси. Акӑ Шӑмат вулӑсӗнҫи Испухан уҫитӗљнитси, уҫитӗљнитса тухвӑ пулин те ҫ̌ӑмнӑ.

— Шкулӑн тӑршшӗ 5 метр, урлӑшӗ 5 метр, ҫӳллӗшӗ 3 метр пулсан, миҫе купиҫ̌ески метр пулӗ теттӗр?

— Паллах ёнтӗ. 75 тийӗр. Уҫитӗљнитсӑ шутлавипе 12 аьҫах тухаї-ҫке!

— Уҫитӗљнитсӑ хваттерӗн тӑршшӗ 5 метр, урлӑшӗ 4 метр, ҫӳллӗшӗ 3 метр пулсан миҫе купиҫески метр пулӗ сирӗн шутпа?

— Ёсир, каллех уҫитӗљнитсӑ шутланипе хирӗҫех, 60 тийӗр, уҫитӗљнитсӑ шуҫӗпе 80 тухнӑ ҫке.

Ак тамаша! Уҫиттӗлнитсӑн таплитсӑ умношени вӗренмеллех марши хавара? „Ступентсӑ".

„Шурӑ алӑллисем."

Ирлесе ирех Шупашкарта пасар урамӗнҫе йалтан килнӗ хӗрарӑмсем тислӗк хыраҫҫӗ, хӑйсем майӗпе мыс каралӑ йумахласа калаҫса навуса тӗмӗн купаласа хураҫҫӗ.

— Тӑххӑр ҫавни тахҫанах иртнӗ.

Ӑшӑ тӳшек ҫинҫен тӑрса тухнӑ аслӑрах ҫынсем хӑйсем шурӑ алӑллӑ майрисене „навус ҫинҫи кӑмпа пек шлепкесемпе хултан ҫаклатса пасар урамнеле анҫӗҫ.

Вӗсем ирхи ҫурхи таса сывлӑша уҫӑлма тухнӑ пулас, анҫах вӑл пулмарӗ иккен,—майри тутисене ҫӳхетсе, хӑйӗн тухҳи шӑршине шӑршласа: „Кҫати! ай паҫушки! ҫвинйи навос кӑвырайут, какой туг ҫистай востух. Иа 3 4 тҫа кологнӑ сишу, и то там рапотаї не стану, стытнӑ, тесе хуҫӗ,

Вӑрӑм вырӑс унӑн аслӑ упӑшки пуҫне ҫӗтретсе: „Та та-та-а-а," тесе васкаса куҫран ҫухалҫӗҫ.

Ҫапла ҫав Шупашкарти мешҫенла, кӑмпа йевӗрлӗ шлепкеллӗ майрасем.

ЎРЁК.

Упа тытрӗҫ.

(Шемшер вул., Шупашкар у.).

Типлер йалне, сурхури иртсен ҫветки вӑхӑтӗнҫе „упа" килсе кӗҫӗ. Ҫав «упа» урам хушшинҫе ҫӳренӗ ҫухне 12 ҫулхи хӗр аҫана рыҫакпа ҫапса питӗнҫен суран турӗ.

Халӗ 4-мӗш уҫасткари сут пайӗ, Шемшер вул. сут тума тухсан, ҫав „упаран" етем—ҫын пултӑр тесе, упана пӗр уйӑхлӑҳ тӳрлетмелли ҫурта хупмалла турӗ.

Унсӑрӑн пурте „упана" тухса кайӗҫ.

ШЕСТЕЛ.

„Есрел" ҫырӑвӗ.

Хресҫен тырӑ акмасӑр пурӑнаймасї, пуп ҫӑмарга ҫимесӗр пурӑнаймасї, тесе ахаҫ каламан пуҫ сав хаҫхи ҫамрӑксем.

«Есрел йатлӑ (хӑрушӑ йат) пӗр корреспотенг ҫыраї:

Туканаш пупӗ (Сала вулӑсӗ) икконӑпа ҫӳренӗ ҫух, килте ашшӗ-амӑшсем ҫук ҫухне, аҫасем умӗҫех ҫӑх йӑввинҫен ҫӑмартасем пуҫтарса кайаї, тет.

Ах, шур курак! Пӑшалҫӗ ӑна!..

ПОЂНИТСĂРА.

Нурăс пођвигсивђе емелĕ:ем çук мар, пур, анђах емелсене кив пакќет хуђĕсемпе, урăх емел ђĕркенĕ, хутсемпе, тата выртса çўрекен хутсемпе ђĕркесе парaççĕ. (Кор çырăвĕ).

Тухтăр:—Мĕн çакă есĕ çаплах ђирлетĕн? Нумайах пулмаст̆ емел парса йатăмăр...

Сывмарри:—Емел те, емел. Хăвăрах ђирлĕтереттĕр. Сирĕн емелтенех ђирлесе карăм.

Тухтăр; Мĕнле?

Сывмарри: Мĕн мĕнли? Емелсене пур йаванса çўрекен, таса мар шăршлă хутсемпе парса йараттăр. Халер йерђĕ пулмалла, сирĕн пек халерсем пирки!..

Ампулаторинђе.

Хвершăл ыйтат̆:

— Ну, мĕн ыратат̆ санăн?

— Хăлха пит ыратат̆?

— Ну кă! Кăтартха хăлхуна?

Хвершăл сылтăм хăлхине пăхат̆.

— „Ушные капли“ кирлĕ. На ређепт.

— Манăн сулахайĕ ыратат̆ђĕ. Есĕ, хвершăл пиђђе, сывă хăлхана пăхса патăн.

— Ну, кайах тата. Сулахай вађђи тепĕр вăхăтра килĕн.

УТИК.

Тутлă кулађă.

Çеçпĕл çырат̆:

Çĕрпўре апат-çимĕç пĕçерсе сутакансем пит йапăх пĕçереççĕ. Ак калăпăр. Танил Макçимăвĕн кулађи ăшĕвђен цĕр майах таракансем, хăмăтласем тухаççĕ, тет.

Апла пулсан кулађă пĕçерекенсем те екКономи решимĕ тăвасшăн. Таракансем, тĕрлĕ çўп çапсем хурса, кулађă нумайрах тухтăр, теççĕ пуљ. Санитар комиççисем ăçта унта? Çухални мĕн?

СӐМАКУНККӐ.

Мухмӑр муҭӗш,
  Самакункӑ,
Маттур есӗ,
  Шӑршлӑ шыв!
Еҫкӗ ҫикӗ
  Хатӗрлесен,
Епӗр сана
  Ӗҫетпӗр.
Анҭах есӗ
  Тӗлӗнмелле,
Тӗрлӗ тӗслӗ
  Пулатӑн.
Ӗҫсен ӗҫсен
  Ҭуна уҫсан.
Вилсе кайма
  Манер пур.
Ҫакӑн пирки
  Макӑн ҭӗрем,
Сана питӗ
  Йуратат̆.
Сан пекех еп
  Йурататтӑп,
Сарӑ тӗслӗ
  Сӑрана.
Сӑра тути
  Хӑмла йӳҫҫи,
Сӑмакункӑ
  Ҭухлӗ ҫук.
Ҫавӑнпа та
  Ырата та,
Саншӑн епӗ
  Шайламасп.
Ҫултавӑкра
  Сана туса,
Ал пӑт ыраш
  Пӗтереп!
Хӑш ҭух саншӑн
  Ҫын курманшӑн,
Лаҫ ҫуталат̆
  Ҫулӑмпа.
Аптрамалла
  Ун ҭух вара,
Ес кил ҫурта
  Пӗтерен.
Сана ӗҫсен
  Макӑн ҭунӑн
Мӑн кӑмӑлӗ
  Ҫухалат̆.
Санӑн пирки
  Милитсисем,
Питӗ хытӑ
  Йӗрлеҫҫӗ
Тытсан вара
  Йухтарнӑ ҭух
Виҫ хут тире
  Сӗвеҫҫӗ.
Сана ӗҫме
  Паҭӑшкӑ та
Пит те хапӑл
  Йаланах.
Сӑмакункӑ
  Тӑвакана
Вӑл нихҫан та
  Йатлас ҫук!

ӐСА.

„Капкӑн лаҫҫинҭи прикӑвӑр:

Кап-кап кап! Кап-кап!
  вулама аван;
Шӑшласа пӑхсан—
  йут шӑршӑ кӗрет.
Виҫ хут тир сӳни
  Пит те пит тӗрӗс.
Сӑвӑ ҫырас—милый ӗҫ
  Милый ӗҫ те йавӑр ӗҫ.
Пуҫтарсам, ӑсна
  Савнӑ „Ӑса“ тус,
Мухмӑр муҭӗшпех
  Кайса мухмӑр уҫ.

„Сӑмакункӑ“ сӑвва есӗ ху ҫырман. Ӑна Аттай 1924 мӗш ҫултах „Канашӑн“ 52 (1182) мӗш № рне ҫапса кӑларнӑҭҭӗ.

Вӑрланӑ ҫӗлӗкпе кӑнтӑр кунех ҫӳреме питех мар. Ӑна пиғсӗрсем тӑваҫҫӗ. Есӗ вӑрланӑ йапалана вӑрӑсен йешҭӗкне йаратпӑр. Анҭах санӑн айӑпна кун пек ҫеҫ каҫарма ҫуккипе сута параспӑр.

„Литтературӑ вӑррине, плакиата“ йепле айӑпламаллине вулакансем татса калӗҭҭӗр.

— Кап! кап кап!
  Ха-ап!
Капкӑн хупӑнҭӗ;
  Аллине пусма—
„Капкӑн“ йышӗ пукӑнҭӗ.

Сылтӑм алла „Капкӑн“ лаҫҫинҭи хӑрӑмпа сӗрсе алӑмӑрсене ал пусатпӑр.

ИЙВАН МУҬИ.
ТАПКӐ.
УРХАМАХ.
УТИК.
ПИЛЕШ.
ВАҪАНККА.
АТТАЙ.
ЕСРЕЛ.
ТИТТОВ.
ПАИРАШК.

„Шурналиссем“.

Шурналиссем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ. Уҫрештенисенҫе исхотӑшҫипе вхотӑшҫи шурналсем ҫине кӗрекенне тухакан хутсене ҫырса тӑракансене те шурналиссем, теҫҫӗ,—пиҫетре ӗҫлекенсене те шурналиссем теҫҫӗ.

Пиҫет ӗҫӗнҫи шурналлиссене кам пӗлмест? Вӗсене пӗтӗм респуплӗкӗпех паллаҫҫӗ. Шупашкарти паллӑ ҫывсем хирӗҫ пулсан та «сторовӑтсӑ» тӑваҫҫӗ,—ал тытаҫҫӗ.

Ҫав тери ҫаплӑ йата камӑн илтесха? Кам ҫаплӑ пуласшӑн мар-ха? „Ҫ“ йулташ та ҫак „ҫап“ урапи ҫинҫен ӳксе йуласшӑн мар. Хӑйве палла кӑларасшӑн. „Ҫамрӑк Хресҫенӗн“ -мӗш № ҫе ҫапла ҫырат.

> «Опкомол пӳровӗн ҫленӗ Изрсуттова йулташа (пионер пӳровӗн инструктӑрӗ) ийулӗн 15 мӗшӗнҫен пуҫласа 1 уйӑха отпуска каймалла тупӑ».

Хаҫат тирпейлӗхӗ! тирпейлӗх решимӗ, ӑҫта ес?

—А-у, еп кунта! Ҫитес № те пӗрпӗр машшинисткӑ каҫҫа кайнине ҫырас тетӗп-ха.

Тем те пулӗ ку ҫухнехи саманара. Камӑн шурналис йатне илтес килместха? Камӑн ҫапа тухас килмӗ?

Е! ПИЛЕТ.

Капкӑн илекенӗн йурри.

Лаша йатӑм йурттипеле
Хрантсус тутри таптатса,
Капкӑн ҫырӑнтӑм хамйатпа
Кулас килсен вулама.
  Сӑрт-сӑрт тӑрӑх ҫӳрерӗм
  Сӑрт ҫырлине пуҫтарса,
  «Капкӑн» лартса ҫӳрерӗм
  Пур ирсӗре тытмашкӑн.
Алла тытрӑм палалайкӑ
Тухрӑм урам хушшине,
„Капкӑн“ илтӗм хампала
Иал куштанне хӗсмешкӗн.
  Ҫӑл ҫӑл йукан шывӗ урлӑ
  Ҫапӑ хурса каҫса кай,
  Ирсӗрлӗхрен хӑтӑлма
  Капкӑн лартса иртсе кай.

ИӖПЛӖ ҪАВАШ.

ТӖЛӖК ӐСТИ.

Арпашнӑ йапала курсассӑн—ревиҫи пуласса.

Анасласан—таварсӑр йуласса.

Аҫа сасси илтсен—конферентси пуласса.

Ахах тупсан—тӳрӗ ҫынна тӗл пуласса.

Ӑратне (уҫрештени пуҫлӑхӗ курсан)—штат нумайланасса.

Ватӑлсан—вӗренме кайасса.

Ыҫӑх курсан—хӑна ху курни пулат.

Ерешмен курсан—кулаксем ҫинҫен токлат тӑвасса.

Вӑрманта кӑшкӑрсан—ҫекретгар ҫлен укҫи пухса ҫӳрессе.

Капкӑн курсан—савӑнасса.

Копператтив курсан—хӗрлӗ таварсӑр йуласса.

Масар курсан—ват ҫынсемпе тавлашасса.

Нухайкка курсан—кивӗ самана ҫинҫен калаҫасса.

Пирус туртсан—вуламалли ҫурта ҫӗнӗ кӗнекесем килессе.

„Пушкӑ“ туртсан—Авиахим ваҫҫи укҫа пухасса.

Пиҫнӗ хӑмла вӗҫнине курсан—тӗнҫе пӗтесси ҫинҫен калакан манах килессе.

Рак курсан—кутӑн ҫынпа ӗҫ тумалла пулат.

Сопранире пулсан — кунӗпех ӑйӑх килсе аптратасса.

Сҫотсем ҫырсан—командировка кайасса.

Ҫӗмрӗк йава курсан—ес пурӑннӑ уҫрештенийе хупса лартасса.

Туй курсан—йала куҫса ҫӳрекен аппарат килессе.

Хӑна ху пӗҫӗк аҫан курсан — пуйас шухӑшпа картла выҫҫасса.

Хӑна ху ҫекреттар вырӑнҫе курсан—йаҫейккӑ тунӑ ӗҫсем ҫинҫен суйса каласса.

Шӑл ӳксен—хуликанпа тӗл пуласса.

Тӗлӗк ӑсти ИӐВАН МУҪИ.

Ответ. редактор А. Золотов.

Чувашлит № 839. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“.